Q 35 33-172

Колхозсла ҫуракипе малашнехи ҫӗнтерӳсен уйӑхӗ

Ҫ. П. Петров, В. И. Токҫин.

# Хӗрлӗ акатуй

## Хӗрлӗ акатуйӗнђе тухса каланисем

Ђӑвашсен патшалӑх истаттӗлстви
Шупашкар—1933

çакăн пек кайа йулассине çутçанталăк вăйне паранса пăхăнассипе витсе пынă.

Çавăнпа та есĕр, Шупашкар районĕнђи колхоçнĕксем, кăçалхи ĕçре тĕп çапăçу пулакан çураки кĕрешĕвĕн малти вырăнне тухса тăнăскерсем, партти орканисатси йертсе пынипе кулаксемпе пупсен хăнăхăвĕсен йулашкисене хăйуллăн, пољшевикла çапса хуçнăскерсем, хăвăрпа пĕрле çак кĕрешĕве уйрăм хуçалăхлă ĕçхресђенĕсене те малалла хăйуллăн илсе пынăскерсем, çуракине кăнтăр йенђи районсемпе пĕр вăхăтра тухса пĕр вăхăт тĕлне тенĕ пекех пĕтернĕскерсем,—çак çĕнтерўпе есĕр ђăннипех мухтанма пултараттăр, мухтанма та тивĕçлĕ есĕр. Есĕр парттипе правиттĕлствă, Пĕтĕм Сойусрипе республĕкри колхоçнĕк-утарнĕксен сйесĕсем: çуракине кĕске вăхăтра, пысăк хăвăртлăхсемпе, пахалăх йенђен лайăх ĕçлесе иртерме ђĕннине мухтавлăн пурнăçа кĕртме пултартăр. Сирĕн утарлă ĕçе кирлĕ пек хак панă та. Ђăваш правиттĕлстви сире çуракире республĕкĕпе малти район вырăнне хурса хĕрлĕ йалав паратŭ. Çакăн пек хисеплĕ накратă пирĕн республĕкређи малти вырăнта пыракан кăнтăрти районсенђен пĕри—Кĕçĕнйелђĕк районĕ çеç илнĕ-ха. (Миіĕнк нумай вăхăтђен тăваллăн ал çупатŭ. „Сывă пулђђĕр колхос уйхирĕн утарнĕкĕсем!“, „Сывă пулђђĕр пољшевикла колхоссем!“ тесе кашкăраççĕ).

Йулташсем! Епĕр хамăр уйава, Хĕрлĕ акатуйне çуракире пысăк çитĕнўсем тунипе çеç мар, тата сирĕн районра та, республĕкĕпе те сотсиалисăм строиттĕлствин татăклă уђаскисенђе пысăк çĕнтерўсем тунипе çитрĕмĕр. Çакă çĕнтерўсем вĕсем—сирĕн утарлă ĕçпе, сотсиалсăмшăн пĕтĕм вăй-хăвата хурса кĕрешнипе, рапођђи клас тăвакан ĕçе, Сталин йулташ илçе пыракан Ленин партти йертсе пыракан сотсиалисăм строиттĕлстви ĕçне пĕтĕм хаваслăха хурса кĕрешнипе пулнă çĕнтерўсем. Акă мĕншĕн ĕнтĕ епĕр хамăрăн уйава—хамăрăн Хĕрлĕ акатуйа уйавлама ђăннипех те тивĕçлĕ.

Акатуй—çĕрĕç çыннисен ђи авлахи уйавĕ,—унăн тымарĕсем çынсем çутçанталăка турă вырăнне хунă, çынсем çутçанталăк вăй-хăвађĕ умĕнђе пуç тайса тăнă,

ылхан туррисемпе усал турӑсене парне кӳрсе пурӑннӑ сӗм аваллӑхран килеҫҫӗ. Ун ҫухне йӑвӑр ӗҫпе ывӑнтаракан кӗрешӳ хыҫҫӑн, акнӑ тырӑсен малтанхи хут йешӗрме пуҫласан, акатуй халӑхсен туйӗ, ҫимӗҫ пуҫламӑшне илнӗ ҫӗр туйӗ пулса тӑнӑ. Ун хыҫҫӑн йумӑҫсем, пупсем, кулаксем, улпутсем килсе тухнӑ. Вара вӗсем ҫак уйава патша йӗркипе улпутсен пусмӑрне тӗреклетмелли, пуҫ пулса тӑракан классене хирӗҫ ҫурасем пек нимӗн ҫӗнмесӗр пӑхӑнса тӑмалла шухӑша массӑ хушшине кӗртсе вырнаҫтармалли уйав туса хунӑ. Ӑна вӗсем суйа проповӑтсемпе, кулакла йӑласемпе тасана кӑларма тӑрӑшнӑ. Авалхи ҫӗр уйавӗ, тырӑсем шӑтса тухнине паллӑ тӑвакан уйав вырӑнне ӳсӗр, ҫапӑҫу, упшур уйавӗ килсе тухнӑ. Хӑйсен ҫут тӗнҫене курман тӗттӗм пурнӑҫӗнҫе выҫлӑхпа ҫук пурнӑҫран хӑтӑлса тухма кунҫула пӗлмен ҫурасем ҫак уйава пӗрпӗринпе ҫапӑҫса иртернӗ.

Халӗ епӗр тепӗр хут акатуй тума пуҫларӑмӑр. Анҫах вӑл халӗ пӗтӗмпех урӑх условисенҫе, историллӗ урӑх тапхӑрта пулса иртет. Халӗ вӑл ҫӗнтернӗ ушкӑнлӑ ӗҫӗн уйавӗ, хамӑрӑн тӗлӗнмелле колхос ҫураки уйавӗ пулса тӑҫӗ. Вӑл ҫӑннипех савӑннипе хӗпӗртмелле уйав, колхослӑ пурнӑҫӑн, колхос ӗҫӗн суркуннехи уйавӗ пулса тӑҫӗ. Вӑл—ӑшҫикӗ йенҫен пролетариллӗ, формӑ йенҫен натсиллӗ уйав. Кӑҫалхи ҫул пирӗн колхоссемпе уйрӑм хуҫалӑхлӑ тӳрӗ ҫынсем, пупсемпе кулаксен мункунне пуҫӗпех пӑрахӑҫа кӑларҫӗҫ, мункун кунӗсем кӑҫал уйхирсенҫе хӗрӳ ӗҫ пынӑ кунсем пулҫӗҫ. Вӗсем май уйавӗн кунӗсенҫе те ӗҫлерӗҫ, мӗншӗн тесен, вӗсем, ҫуракири пӗр кун ҫулталӑка тӑрантассине лайӑх пӗлнӗ. Ҫураки вӑхӑтӗнҫе пӗр сехете усӑсӑр иртерни те темӗн ҫухлӗ тырпул тухӑҫне ҫухатма пултарассине вӗсем лайӑх пӗлнӗ. Ҫӑнах та пирӗн ӗҫре туса ҫитерӗйменнисем йӗркесӗрлӗхсем нумай ӗнтӗ, анҫах епӗр мухтанса мар, ҫӑнипех ҫапла калама пултаратпӑр: пирӗн респуплӗкри колхоҫнӗксемпе уйрӑм хуҫалӑхлӑ ӗҫхресҫенӗсем полҫшевикла ҫураки ҫӗнтерӗвӗшӗн наҫарах кӗрешмерӗҫ. Ҫавӑнпа та пирӗн праҫникре савӑнма, хӗпӗртеме, йурлама тӳрӗ, ҫӗререн тӑрӑшса ӗҫленӗ, полҫшевикла колхосшӑн, вӑйлӑ тырпулшӑн Сталин каланӑ пек—пур

колхоçнĕксене те пуйан пурнăçлă тăвассишĕн ырми канми ĕçленĕ çынсем анђах пултараççĕ. Пирĕн ĕçлĕх килйышĕнђе, пирĕн пролетарилле уйавра найансем, кахалсем, љўпперсем, рвађсем, çынăнне хапçăнакансем, колхос пурлăхне çаратакансем, ĕç тистсиплинине хавшатма пăхакансем, колхоса ишĕлтерме тăракансем ваљђи вырăн çук. Вĕсене епĕр нимĕн шеллемесĕр нимĕне пăхса тăмасăр çĕрмĕрсе тăкăпăр.

Пирĕн йал халĕ çĕнĕлле пурăнма пуçларĕ, çĕнĕлле ĕçлет вăл халĕ, хăйĕн праçникĕсене те—çĕнтерўпе çитĕнў кунĕсене, хăйĕн паттăр ĕçĕсене палăртакан праçниксене те çĕнĕлле уйавлаť. Анђах, хамăр çитĕнўсемпе савăнма тивĕçлĕ вăхăтра та пирĕн вăйлă тырпулшăн, колхоссене тĕреклетессишĕн кĕрешес тĕлĕшпе умра тăракан тата пысăкрах сатађсене те манма йурамасť. Вăйлă тырпулсăр пысăк тупăшлă колхос та, паљшевикла колхос та, пуйан пурнăçлă колхоçнĕк та пулма пултараймасť.

## Пирĕн йулса пыракан колхоссем пулмалла мар

Çирĕн районра, тата ытти районсенђе те кайа йулса пыракан колхоссем пур-ха, вĕсенђе ĕç тистсиплини йапăх, ĕç пахалăхĕ сахал, вĕсенђе лашасене тирпейлĕ пăхни, машинсене тирпейлĕ тыткаласси, колхос пурлăхне лайах пăхса усрасси, тырпул тухăçĕшĕн пољшевикла тăрăшса ĕçлени çукха. Крайра пĕрремĕш вырăн йышăнма пултарнă, Совет сойусĕнђе малти вырăнта пыракансен шутне кĕнĕ респуплĕкре кайа йулса пыракан колхоссем пулмалла мар. Çавăнпа та пирĕн ăнăçлăхсем, уйрăм çитменлĕхсемпе татăклăн кĕрешме уйрăм уђаскăсенђе йулса пырассине татăклăнах пĕтерсе пыма алăри лайăх рыђак пулса тăмалла. Пирĕн хаљ пур çĕрте те калђасем лайăх, йем-йешĕл шăтса тухрĕç. Çапла вара, пысăк тырпул тухăçлăхĕ патне пырасси, пур колхоçнĕксене те пуйан, тĕреклĕ хуçалăхпа пурнасси патне илсе çитермелли меслетсем пирĕн хамăр алăра. Çавăнпа та пирĕн хаљхи вăхăтри хĕрўллĕ сатађ—акнă тырпула куллен пăхса тăрассине йĕркелесси, çум çумлас кампанийе ăнăçлă иртересси, тата йалхуçалăхне сийен кўрекен хурт-кăпшанкăсемпе татăклăн кĕрешес-

сине орканисатсилесси. Епĕр халĕ йалхуçалăх производствин технĕккине пурте çĕнсе илеймен-ха, елементтарлă акротехнĕккă правĕлисене пурте вĕренсе çитеймен, йалхуçалăх ăслăлăхне çĕнсе илессишĕн епĕр naђар кĕрешетпĕр-ха, пирĕн халĕ те куђттурлăх çитеймест-ха, епĕр халĕ те пуршуйла кахаллăхăн йулашкине, ĕç çине тирпейсĕр пăхассине татăклă пĕтерсе хуман-ха.

Ђăваш респуплĕкĕн тĕрлĕ кĕтесĕсенђен акнă уйсенђе пăрçа нăррисем проволђнăй ђерв, тата ытти йалхуçалăхне сийенлекенсем çинђен тревокăллă çикналсем килме пуçларĕç те ĕнтĕ. Çакă вăл, Опкомпа правиттĕлствă кун çинђен вăхăтра асăрхаттарнă пулсан та, пирĕн çĕр оркăнĕсем, колхоссем тата уйрăм хуçалăхлă ĕçхресђенĕсем йалхуçалăхне сийенлекенсемпе кĕрешме хатĕрленсе çитменни çинђен каласа парат. Çураки вăхăтĕнђе пулнă хĕрўллĕ ĕçе, халĕ питĕ паха, лайăх шăтса тухнă калђасене йалхуçалăхне сийенлекенсене çисе пĕтерме ирĕк памалла мĕн тата пирĕн? Çук, çакăн пек намăса тума пирĕн тивĕç çук! Çавăнпа та ĕнтĕ халех, пĕр тăхтамасăр, çак уђаскăри пођшевиккла кĕрешĕве сарса йамалла, вырăнсене пур кирлĕ химикатсене, инструментсене, йатарласа вăл ĕçпе ĕçлекен рапотнĕксене йарса йалхуçалăхне сийен кўрекен хурткăпшанкăсемпе кĕрешме уйсенђе талăкĕпех тешурствăсем орканисатсилемелле. Прикатăсем, çвеносем, кашни колхоçнĕк, кашни уйрăм хуçалăхлă ĕçхресђен, комсомолĕссем, пионерсем, КÇШ-сем, уђитлĕсем, хĕрарăм телекаткисем, йалсовет ђленĕсем, тепутат крупписем çак уђаскăра хăйсене хушнă ĕçсемшĕн пысăк ответлăха илсе хĕрўллĕ, пĕр харăс тырпул тăшманĕсене хирĕç хайар кĕрешĕве тухмала.

Халех ĕнтĕ тивĕçўсĕр ĕçсем çинђен, ђылай вырăнсенђе çум çумлас кампанийе вăхăтра тытăнманни çинђен, тата хăш çĕрте çум çумланă пулсан та çум курăкĕсене çавăнтах хăварса тĕрлĕ сийенлекенсене пурăнма лайăх вырăн туса пани çинђен сăмахсем илтĕнеççĕ.

Пирĕн халех массăллă çум çумлама тытăнмалла. Пирĕн, çум курăкĕсене пĕр тумлам нўрĕк те, пĕр тумлам çимĕç сĕткенне те памастпăр тесе, пĕр пуђах та,

пĕр пĕрҫĕ тырă та йалхуçалăхне сийенлекенсене памасгпăр тесе, кахаллăхпа йулхавлăха тата йапăхлăхпа пĕр крам тырă та çухатмасăр, тесе колхосла çирĕп сăмах памалла.

Пирĕн ĕнтĕ халҫ уйри тырпула пухса кĕртес кампанийе хатĕрленме тытăнмалла, тырă пĕтĕмпех пиçсе çитес вăхăта кĕтсе тăмалла мар; пĕтĕм тырпула нимĕн тăккаламасăр пуçтарса кĕртмелле, вара патшалăха тырă тăратма илнĕ харпăрхăй опесаттĕлствине вăхăтра тултарса çитермелле. Тутар респуплĕкĕнҫи утарнĕк-колхоçнĕксем патшалăха тырă тăратассине çентăпĕрĕн 1-мĕш тĕлне татса пĕтерме опесаттĕлствă илнине есĕр пĕлтĕр-ха. Пирĕн те Тутар респуплĕкĕнҫен йулма тивĕç çук. Пирĕн вĕсемпе пĕрлех Совет сойусĕнҫе малта пыракансен ĕретĕнҫе пыма пур майсем те пур. Çакă малти вырăншăн ĕнтĕ пирĕн колхоçнĕксен, пур уйрăм хуçалăхлă ĕçхресҫенĕсен, партти орканисатси йертсе пынипе, хĕрӳллĕ, утарлă кĕрешмелле.

## Ийунĕн 1-мĕшне сайома пĕтĕмĕшпех сарса çитермелле

Халĕ пирĕн çĕршывра талкăшпех калама çук пысăк политтĕклă тата хуçалăхла ĕç—малта пыракан рапоҫҫисемпе колхоçнĕксем ыйтнă тăрăх, иккĕмĕш петтилеткăн пирвайхи çулĕ йаҫĕпе кăларнă сайома сарас ĕç пырать. Вăл сайома Совет сойусĕнҫи мĕлйунлă массăсем хушшинҫе питĕ пысăк кăмăлпа йышăнҫĕç. Пирĕн партти, совет влаçĕ сотсиалисăм опҫĕствишĕн кĕрешӳре—пирĕн ĕç, пирĕн сайомсем çĕнĕ хапрăксем, савăтсем, електростантсисем, ҫукунçулсем, трактăрсемпе йалхуçалăх машинĕсем, автомопилсем тума, тырпул тухăçлăхне хăпартма, йала сотсиалисăмла çĕнетсе çитерме, хамăр пурнăçа тата лайăхрах, тутăллăрах, кулҫтурлăрах, савăнăçлăрах тума кирлине пĕлекен мĕлйунлă ĕçхалăх массисем çине тайăнса тăнă пирки вăйлă. Акă мĕншĕн вăл—лере, пирĕн çĕршыв тулашĕнҫе пĕтĕм тĕнҫе калама çук таран екконоумĕк криçĕсĕпе хупланнă хушăра,—унта мĕлйуншар çын выççăн вилес пек тăраççĕ, панксем вуншарăн та çĕршерĕн хупăнаççĕ, трессемпе финанс орка-

нисатсисем пăрахăҫа тухаҫҫĕ, унта панккирсемпе фаприкантсем перĕнсе вилеҫҫĕ, мĕлйуншар ҫынсен укҫа ҫук пирки унта тырра ниҫта ђикме пĕлмеҫҫĕ,—ҫав хушăрах пирĕн кашни кунсеренех ҫĕнĕ претприйаттисем ҫитĕнеҫҫĕ, ĕҫхалăх массисен пурнăҫĕпе куљттурлăхĕ ӳсет, савăнăҫлă лайăх пурнăҫ тĕрекленет. Ҫакăн пирки ҫеҫ пирĕн Совет сойусĕнђи ĕҫхалăхĕ хăй пухнă укҫана хăйĕн патшалăхне, хăйĕн влаҫне—рапођђисемпе хресђенсен влаҫне хаваллансах парать, ҫакăн пирки ҫеҫ пирĕн утарлă ĕҫленине ҫав тери хисеплеҫҫĕ.

Ҫакăнта пирĕн никам ҫĕнтерейми вăй. Ҫакăнта—пирĕн ҫĕршыв ђухăнран та ђухăн, вăйсăр патшалăхран вăрҫă технĕккине калама ҫук лайăх авăрланса, пирĕн ҫĕршыв ђиккисене питĕ лайăх сыхласа тăракан Хĕрлĕ ҫар тытакан интустрилла ҫĕршыв, криҫĕсран та, тул йенђен тапăнасран та хăраман ҫĕршыв пулса тăнин „ҫекређĕ“. Пирĕн сайомсем—ĕҫхалăх масси парттипе совет влаҫне шанса тăнине, пĕтĕм тĕнђери пуршуаҫине, тата пирĕн мĕн пур тăшмансене пирĕн Сотсиалисăмла совет респуплĕксен сойусĕ вăйлипе тĕреклине кăтартакан калама ҫук пысăк темонстратси. Пирĕн кашнинех ҫакна ăнланса илмелле: ҫак сайома епĕр мĕн тери хăвăрт сарса ҫитеретпĕр—пысăк историллĕ ĕҫсем тумалли иккĕмĕш петтилеткăн пирвайхи ҫулĕнђи прокрамне те ҫав тери ăнăҫлăрах тултарма пултаратпăр, пирĕн ҫĕршыв ҫав тери тĕреклĕ вăрҫăран хăрами ҫĕршыв пулать.

Кĕҫĕнйелђĕк районĕ майăн 24-мĕшнех колхоссем тăрăх сайома укҫан 94%, уйрăм хуҫалăхсем тăрăх укҫан 63%, сарма ĕлкĕрнĕ. Ҫак район-ҫуракинђи ăнăҫлăхсене сайома ҫителĕклĕ тултарнипе ҫирĕплетме йышăннă, ҫак районти ĕҫҫыннисем ийунĕн 1-мĕшне—колхоҫнĕк-утарнĕксен крайри сљођĕ уҫăлнă тĕле—сайом укҫине пур колхоссенђе те тата пур уйрăм хуҫалăхсем йенĕпе те парса татма йышăнђĕҫ. Сирĕн, пирĕн респуплĕкри ытти районсем пекех, кĕҫĕнйелђĕксенђен кайа йулмалла мар. Правиттĕлтсвă халĕ ҫеҫ сире панă Хĕрлĕ йалав пысăк тухăҫлă тырпулшăн, пољшевикла колхоссемшĕн кĕрешмелли йалав ҫеҫ пулмалла мар, вăл—сайом укҫине пур колхоссенђе те тата районри ытти уйрăм хуҫалăхсем

йенӗпе те срукҫен пухса ҫитерессишӗн кӗрешмелли йалав пулса тăмалла. Колхоҫнӗк-утарнӗксен крайри сҫотне ҫуракинҫи ҫӗнтерӳсем ҫинҫен кăна мар, сайомпа тунă ҫӗнтерӳ ҫинҫен те раппăрт парасси—пур малта пыракан колхоссемпе йалсоветҫӗсен, пур колхос уйхирӗсенҫи утарнӗксен, пӗтӗм Ҫăваш респуплӗкӗнҫи ӗҫҫыннисен хисеплӗ ӗҫӗ.

## Тӳрӗ ӗҫлекен уйрăм хуҫалăхсене колхоса кӗме пулăшар

Йулташсем! Пирӗн колхоссем ҫуракирен татах та ҫирӗпленсе, колхос происвотствине татах та пысăк оппăҫӗсене пухса тухрӗҫ, ҫӗршер тата пиншерӗн ҫӗнӗ утарнӗксем ӳсрӗҫ, колхоҫнӗксен массинҫен ҫирӗп катăрсем тухрӗҫ, вӗсем колхос хуҫалăхне орканисатсилес ӗҫӗн пысăк технӗккине тавҫăрса илсе пыраҫҫӗ, вӗсем ӗҫ лайăхрах пытăр тесен тата ҫăн-ҫăнах тырпул лайăх тăвас тесен мӗн тумаллине пӗлеҫҫӗ. Епӗр хамăр колхоссен оппăҫӗпе те Вăтам Атăлти колхоҫнӗк-утарнӗксен сҫотӗнҫе Молăттăв йулташ:

„Пирӗн колхоссен ӗҫӗнҫе тата йӗркесӗрлӗхсем нумай-ха. Пирӗн хушăра халӗ те кахалсем, ҫапкаланҫăксем сахал мар тӗл пулаҫҫӗ, анҫах куна колхоҫнӗксен масси ҫинҫен каламалла мар. Нумай тӗслӗхсем мӗлйунлă колхос массисем колхос ӗҫӗ ҫине, ҫавăн пекех тата колхос ҫине те уйрăмах лайăх пăхнине кăтартса параҫҫӗ. Ӗҫ ҫине ҫакăн пек пăхни кăна ӗнтӗ колхос ӗҫӗн тухăҫлăхне, колхос уйхирӗсенҫе тырпул тухăҫлăхне хăпартассине, кунтан вара, колхос хресҫенӗсем пӗтӗм пурнăҫ условисене лайăхлатассине ăнăҫтарса йӗркелесе пыма пултарать"—тенине мӗн шикленмесӗрех ҫирӗплетме пултаратпăр.

Тӳрӗ ӗҫлекен уйрăм хуҫалăхсене колхоса кӗме пулăшас, вӗсене колхоссен ӗҫӗнҫи ҫӗршер лайăх тӗслӗхсемпе (ун пек тӗслӗхсем пирӗн халӗ нумай) ыйткалакан пурнăҫӗнҫен, наҫар пурнăҫран тухмалли май колхосра кăна пулнине кăтартасси сирӗн ӗҫ, йулташ-колхоҫнӗксем, пуринҫен ытла утарнӗксен ӗҫӗ, пирӗн пурсăмăрăн

та ĕçлесе пымалли ĕç. Çуракине хатĕрленсе иртернĕ вăхăтра пĕтĕм республĕкĕпе уйрăм хуçалăхсем колхосалла туртăнни палăрђĕ. Ку вăхăтра сирĕн районта коллективисатси 48 прођђăнран 55 прођђăна хăпарнине кăтартни те çителĕклĕ. Ку уйрăм хуçалăхсем çĕршерĕн, пиншерĕн—колхос кăна ĕçхресђенĕшĕн тĕрĕс сул пулнине ăнланипе пулнă. Вăл уйрăм хуçалăклă хресђенсем хушшинђе колхос йенелле пысăк туртăну пулнипе пулнă. Çавăнпа та пирĕн Молăттăв йулташ Вăтам Атăлти колхоçнек-утарнĕксен сљотéнђе:

„Малта пыракан колхоçнĕксен ĕнтĕ хаљ пирĕн умра тăракан çĕнĕ сатађсене ăнланса илмелле.

Колхос йĕрки татăклăнах çирĕпленсе çитрĕ.

Халĕ пирĕн сатађ—уйрăм хуçалăхлă ĕçхресђенсене колхоса кĕме ирĕк памалла, вĕсене ĕнтĕ тĕплĕ пăхса илмелле тăвас пулаť. Малта пыракан колхоçнĕксен уйрăм хуçалăхлă хресђенсем хушшинђи ытла та кайа йулса пыракан йулташсене пулăшса пымалла, вĕсенђен лайăххисене аслă колхос ĕçне тăвакансен ретне тăратма пулăшмалла“ тесе кăтартнине лайăххăн ăнланса илмелле.

Анђах пирĕн колхоссен алăкне тӳрĕ пĕтĕм колхоçнĕксемпе пĕрле колхоса çирĕплетессишĕн, ăна полђшевикла, пысăк тупăшлă тăвассишĕн, лайăх тырпулшăн, пур ĕçсене те лайăх тăвассишĕн, найансене, ĕç тистсиплинине пăсакансене хирĕç кĕрешекен, патшалăх умĕнђи опесаттĕлсвăсене тӳрĕ тата вăхăтра тĕплĕн пурнăçлакан уйрăм хуçалăхлă хресђенсемшĕн кăна йари уçмалла. Кун пек ђухăнпа вăтамсене хамăрпа пĕрле колхос тума, хамăрпа пĕрле колхоçнĕксен пурнăçне лайăхлатма, вĕсене пуйан пурнакан тума пулăшасси пирĕн ĕç.

Çак çĕнĕ сатађсенђен—клас кĕрешĕвĕ вăйсăрланаť, кулакпа унăн акĕнђĕсем колхоссене пӳлсе ырас ĕçе пăрахнă, вĕсем колхоссене шалтан салатас, кашни утăмрах колхоссене аркатас ĕçе пăрахнă, тесе ăнланни калама çук пысăк йăнăш пулĕђђĕ. Клас тăшманĕсем пирĕн çитĕнӳсене курса, колхос йĕрки татăклăнах çирĕпленнĕ факт умĕнђе пулса, пайанхи уйрăм хресђенсем—ђухăнпа вăтамсем колхоссене ытларах туртăннине курса, пирĕн

колхоссене çирĕплетес ĕçсене хирĕç пушшех вирлĕн кĕрешеççĕ, пур майсемпе те тистсиплинăна хавшатма тăрăшаççĕ, кайа йулнисене колхоссене хирĕç, хăйсен патшалăх умĕнђи опесаттĕлстисене пурнăçа кĕртессине хирĕç тăратма пăхаççĕ. Пирĕн тăшмансем татах та вирлĕн тискерленсе колхос происвотствине йапăхлатма, колхос пурлăхне салатми пăхаççĕ. Ку тăшмансене, Молăттăв йулташ каланă пек:

„Малашне те хыттăн çĕмĕрсе пымалла, хăйсен ĕçĕпе хăйсенех ирĕксĕрлесе пымалла".

Кунпа пĕрлех, Молăттăв йулташ каланă пек, пирĕн колхоссем çав тери çирĕпленсе çитсе колхоçнĕксем хушшинђен çирĕп актив, малта пыракан, колхоссене йертсе пыракан катăрсем тухрĕç, çавăнпа та халĕ пирĕн сатађ:

„Массăллă репреççисенђе мар, пуринђен ытла массă хушшинђи политтĕкпа орканисатсиллĕ ĕçсенђе хамăр тăшмансене пађах çĕмĕрессинђе".

Кулаксен сапоташне орканисатсилекенсене, колхоссенђе сăтăрлă ĕçсене йертсе пыракансене пирĕн пĕр шеллемесĕр тĕппипех салатса пĕтермелле. Пирĕн колхçнĕксен, пирĕн колхос активĕн клас тăшманĕсене палăртма, вĕсене тупма, çĕмĕрме пĕлмелле.

„Клас тăшманĕ хушнипе колхос ĕçне пăсма, колхоссене тĕреклетме ђăрмантарма пăхакансене пĕђђенле, пулăшусăр вырăна тăратса хăвармалла".

Клас тишкĕрӳне татах та хăпартасси, тăшмана хыттăн астăвасси, кулака, кахала, вăрра хăйĕн сăтăрла ĕçне пурнăçа кĕртме памалла марри—сирĕн ђаплă ĕç, йулташ колхоçнĕксемпе ĕç хресђенĕсем. Куна тума сирĕн халĕ пур майсем те пур, сирĕн вăй пур, сирĕн пысăк оппăт пур, сирĕн колхос стройĕ пађах çĕнтерес шанђăк пур. Хамăрăн мăссăллă тата орканисатсиллĕ ĕçе сарса йарса колхос происвотствин пĕтĕм технĕккине вĕренсе, çитĕнӳсене пĕлсе кăтартса, пођшевикла ĕнентерсе, тата тӳрĕ ĕçхресђенсене колхоса кĕме пулăшса, епĕр хамăр колхоссене татах та ытларах çирĕплететпĕр, ђăн-ђăнах нумай тата лайăх тырпул туса илетпĕр, хамăр колхоçнĕксене пуйан тăватпăр.

## Ĕç утарнĕкĕсене епĕр мухтав хăми çине çĕклĕпĕр

Йулташсем! Епĕр халĕ малта пыракан колхоссене йалсоветсене, уйрăм утарнĕксене хисеплĕ хутсем накратăсем, премисем патăмăр. Накратăсем, крамăттăсем, премисем ĕлĕк те, револƫутсиƫƫенхи вăхăтра та пулнă, унƫухне те панă вĕсене. Анƫах патша правиттĕлетвин, улпутсен кăпиталиссен накраƫĕсене илекенсемпе совет влаçĕпе комуниссен парттин накраƫĕсене илекенсем хушшинƫе пысăк уйрăмлăх пур. Револƫутсиƫƫенхи вăхăтра пысăк накратăсем камсем илме пултарнă-ха? Кам та кам патша влаçне çирĕплетнĕ, кам та кам пуршуаçи стройне çирĕплетнĕ, кам та кам выçăхнă рапоƫƫисен сапастовккисене вутпа йун айне туса хума пултарнă, кам та кам хресƫенсен пăлханăвĕсене пĕтерме пултарнă, кам та кам улпутсене, хапрăк савăт хуçисене мĕлйуншар çынсене йевĕрсĕр експлоататсире тытса тăма пултарас „ƫăнлăха" çирĕплтме пулăшнă, кам праçнĕксен йаƫĕпе харампырсем ĕçхалăхĕн йунĕпе тарне ытларах йухтарса илме пулăшнă, çавă накратă илнĕ. „Георгиевский", „Святой Анны" хĕресĕсене, укçаллă премисене, пысăк ƫинсене илме ĕлĕк рапоƫƫисемпе хресƫенсен йунне ытларах тăкма пĕлнĕ, хăйсен ирсĕрлĕхĕпе, тискерлĕхĕпе ƫăтăмлăхран тухнă выçă массăна сăмах ƫĕнейми тăвасси патне çитерме пĕлнĕ çынсем анƫах пултарнă. Патша самани, улпутсем, кăпиталиссем çакăн пек „хисеплĕ ĕç" тăвакан паттăрсене çеç премисем панă.

Влаç рапоƫƫисемпе хресƫенсен аллинƫи çĕршывра камсене премисем, накратсем парса ƫысласçç-ха. Кунта епĕр накратăсене, хисеплĕ хутсене кам лайăх тата хастарлă ĕçлет, кам хăйĕн пĕтĕм вăйхăватне сотсиалисăм ĕçĕ ваƫƫи, пĕтĕм ĕçхалăхĕ ваƫƫи сутă савăнăçлă пурнăç тума парат, çавна накратă, преми, хисеплĕх хуƫĕсем параççĕ.

Есĕ, хапрăк-савăт утарнĕкĕ, колхос уйхирĕсен утарнĕкĕ, пирĕн историллĕ кулленхи ĕçсен ƫăн-ƫăн паттăрĕ пулса тăтăн, епĕр сана ĕнтĕ хисеплĕ хăма çине çĕклетпĕр, сана кăмăлран саватпăр, сан çинƫен епĕр çĕнĕ йурăсем

тăватпăр, мухтав йуррисем йурлатпăр, сана малашне те тăвăмлă, пултаруллă ĕçсем тума аслă çул уçса паратпăр. Мĕншĕн тесен есĕ Совет çĕршыв утарнĕкĕ хăвăн аллунта сотсиалисăмла ăмăрту йалавне çӳле çĕклесе ăмăрту „ĕçе ĕлĕк намăс, йăвăр тийем вырăнĕђе шутланниђен мухтав ĕçĕ, ђыслăх ĕçĕ, ђаплăхпа паттăрлăх ĕçĕ“ пулнине кăтартрăн.

Вуннилĕк çул ĕлĕкрех Ленин çапла калнă: „Сотсиалисăм ăмăртăва сӳнтерме мар, унпа ђăннипех сарлакан, ђăннипех массăлăн усă курма, ĕçхалăхĕн ђăннипех пысăк пайне хăйсене хăйсен пултарул хне, хăйсен таланђĕсене кăтартмалли ĕçе йавăçтарма ђи пирвай май тăват,— вăл талантсем халăхра—пуçламан çăлкуç пекех, вĕсене кăпиталисăм пиншерĕн, мĕлйуншарăн луђăркана, таптана, пăвнă“.

Халĕ ĕнтĕ çав çăлкуç вăйлă фонтанпа пĕрĕхсе тухрĕ, çĕршер пин, мĕлйунĕ-мĕлйунĕпе ĕçĕн ђăн-ђăн паттăрĕсем тсехсенђе, станоксем патĕнђе, трактăрсем çинђе, уйхирсенђе, ăслăлăх институђĕсенђе, шкулсенђе, литтераттурăпа искуствăра, пирĕн ытамласа çитми Сотсиалисăмла респуплĕксен сойусĕн пĕтĕм кĕтесĕсенђе хавасласхпа, хастарлăхпа, историре курман паттăрлăхпа классăр сотсиалисăмла опђăлăхăн çуртне туса çитерессĕ. Вĕсен çав паттăр ĕçне поетсем, мусăкçăсем, литераттăрсемпе хутошнĕксем йурлама тытăнассĕ, вĕсен тĕслĕхĕсемпе йут патшалăхсенђи пусмăр айĕнђе пурăнакансем мĕлйунĕ-мĕлйунĕпе пĕтĕм тĕнђипех кăпиталисăма тĕппипех çĕмĕрсе тăкма çĕкленессĕ, вĕсен тĕслĕхсемпе çĕнĕ пурнăç тума вĕренессĕ, тата вĕсене ăруран ăрăва асăнса пырĕç. Апла пулсан, сотсиалисăм ĕçĕн Ленин йалавне тата çӳлерех çĕклер! Хамăр ретсене Ленин партийĕпе унăн сулпуçĕ—Сталин й. тавра тата хытăрах пĕтĕçтерер, иккĕмĕш петтилеткăра классăр сотсиалисăм опђĕстви тăвассишĕн тата хытăрах çине тăрса кĕрешер!

Сывă пултăр пирĕн хаклă та йуратнă çулпуçĕ Сталин йулташ!

Çĕнĕ çитĕнӳсем патне, малалла!

В. И. ТОКҪИН.

## Ҫуракинҗи ҫӗнтерӳсем урлӑ умри сатаҫсене пурнӑҫлассишӗн кӗрешер.

**Вӑрнар районӗнҗи колхоҫнӗк-утарнӗксен пуххинҗе 1933 ҫ. майӑн 25-мӗшӗнҗе тунӑ токлатран.**

Йулташсем! Кунта пухӑннӑ колхоҫнӗк-утарнӗксен, җи лайӑх ӗҫлекен уйрӑм хресҗенсен районри сҗотне, тата вӗсем урлӑ ытти колхоҫнӗксемпе ӗҫхресҗенсене комуниссен парттин Ҫӑваш Опкомӗпе Ҫӑваш респуплӗк правиттӗлстви хӗрӳллӗ салам калаҫҫӗ. Есӗр кунта иккӗмӗш петтилеткӑн пӗремӗш ҫуракинҗе халиҗҗен пулман ҫӗнтерӳ тунӑ хыҫҫӑн пухӑнтӑр. Ку сҗотра сирӗн ҫуракинҗи ҫӗнтерӳсемпе ҫитменлӗхсене пурне те лайӑх сӑнаҫа пӑхса, вӑйа умри сатаҫсене татас ҫӗре пухмалла.

Йулашки ҫулсенҗе пирӗн Ҫӑваш респуплӗкӗ җылай ӗҫсем тӗлӗшпе Совет сойусӗнҗе малти ӗрете тухрӗ. Ҫулйӗр сториттӗлствинҗи ҫӗнтерӳсем пирӗн респуплӗке, респуплӗкри ӗҫхалӑхне утарлӑ отрет, ыттисене ӗҫлеме верӗнтекен отрет туса хуҗӗҫ. Вӑрман хатӗрлес ӗҫре малта пыратпӑр епӗр. Куҗттур ӗҫӗнҗе те пысӑк ҫитӗнӳсем тунӑ епӗр. Пӗлтӗр кӗраки йенпе, тырӑ хатӗрлев ӗҫпе малти ӗрете тухрӑмӑр. Ҫавӑн пекех кӑҫал җӑваш ӗҫҫыннисем комуниссен парттийӗ йертсе пынипе кӗрешсе мӗнле пысӑк ҫӗнтерӳсемпе малалла пымаллине кӑтартса паҗӗҫ.

Колхоссенҗи утарнӗксемпе җӗререн тӳрӗ ӗҫлекен уйрӑм хуҫалӑхлӑ ӗҫхресҗенсем хастарлӑн кӗрешнипе пирӗн респуплӗк кӑҫал ҫуракине пӗлтӗрхинҗен виҫӗ ерне малтан туса пӗтерҗӗ. Ку ҫӗнтерӳ хуҫалӑх ӗҫӗнҗи ҫентерӗве ҫеҫ пӗлтермест. Ҫак ҫӗнтерӳ ӗмӗртен йулнӑ кивӗ йӑласене питех пысӑккӑн пырса тивнине те пӗлтерет. Акӑ иртен

те ир акассинех илерха. Ĕлĕк уйрăм хуçалăхра хресҫенсем пыҫҫăкпа шыв-шуртан хăраса пўртрен те тухмасăр ларнă вăхăтра—кăçал колхоçнĕксем 15 пин кектара йахăн тырă акрĕç. „Йакурисене", „микулсене", „мункунсене" шута илсе акассине çĕнтертĕмĕр епĕр. Çавăнпа та епĕр ку çĕнтерĕве çынсен ăстăнĕнҫе пулса пыракан пысăк улшăну вырăнне хуратпăр. Колхос ĕçĕнҫе ҫĕререн, хастарлă ĕçлекен утарнĕксем пăнтăхса кайнă кивĕ йаласене, кивĕ хăнăхусене çĕнтерсе хăйсем хыççăн пĕтĕм колхоçнĕксене, пĕтĕм ĕçхресҫенсен массине мĕнле ĕçлемеллине кăтартаç. Вĕсем, утарнĕксем, ĕçхалăхĕн аслă çулпуçĕ Сталин: мĕн пур колхоçнĕксене пуйан пурнакан тăвасси çинҫен панă сатаҫа пурнăçа мĕнле кĕртмеллине кăтартаççĕ. Утарнĕксем хастарлăн кĕрешни колхоссем хушшинҫе, прикатăсем хушшинҫе сотсиалисăмлă ăмăрту вăйлăн сарăлса пыни çуракине хăвăрт туса çитерме, çав вăхăтрах уй ĕçĕн пахалăхне ўстерме май паҫĕ.

Çакна кура майăн 24—26-мĕшсенҫе пĕтĕм Ҫăваш респуплĕкĕпе çурхи ĕç праçникĕ—хĕрлĕ акатуй пулса иртет. Акатуй уйавĕ ҫăвашсен кăçал çеç пуçланман. Авалах пуçланнă.

Авал ăна ҫăвашсем хăйсем ĕçлесе тунă çĕр çĕнĕ вăрлăхпа йăвăрланнине хисеплесе тунă. Выҫăх йĕкĕрлешсен çĕнĕ ҫун пулнă йевĕрлĕ, çĕр те акнă вăрлăхпа йăвăрланат, çĕнĕ тырпул çуратат. Çакăн пек шухăшпа тунă акатуй—ĕç ҫыслăхĕ, йăвăр ĕç хыççăнхи уйав пулнă. Анҫах ĕçхалахне пусмăрлакансем, експлоататăрсем, пупсем унăн сăнне пăснă, ăшҫикне вараланă. Ĕç праçникĕ вырăнне, ĕçе хисеплекен уйав вырăнне—кахала вĕрентекен, ĕçрен пăрса йаракан, турă çине шантаракан ĕçкĕ туса хунă. Ĕçе ҫыслас вырăнне хресҫенсене: турра пуççаптарма, хăйсем çине шанас вырăнне турăран тархасласа „ыйтма" вĕрентнĕ. Йавăр ĕç пĕтрĕ ĕнтĕ тавай канас, ĕçкĕ тăвас, теме вĕрентнĕ, (ĕçсе ўсĕрлсен тўпелешес си, пĕрлех пулнă ĕнтĕ). Çапла ĕç хаваслăхне ўстерес вырăнне кивĕ, акатуйне ĕçрен мăшкăллă йапала ирĕксĕртен çеç ĕçлемелле йапала туса хунă.

Ку çеç те мар. Кайарахпа патша тарçисем çак хăйсемшĕн майлă уйава та пĕтерсе лартрĕç. Мĕншĕн!

Акă мĕншĕн. Ĕçхалăхне ђуралăхран кăларма ĕçлекен револђутсионерсем çав праçнĕксенђе патша йĕркине хирĕç вирлех акитатси тума пуçланă. Вăл пуринђен ытла 1905—07 мĕш çулсенђе палăрђĕ. Çавăн хыççăн ђăваш ĕçхалăхне акатуй праçнăкне тума ђарнă.

Хаљ пирĕн ĕçхалăхĕн ирĕклĕ çĕршывĕнђе йăлтах урăхла. Експлоататтăрсене шăлса тăкса, вĕсенђен тасалнă çĕр çинђе ирĕклĕ колхоçнĕксем хастарлăн ĕçлесе халлиђен нихăçан пулман пысăк çĕнтерÿсем тăваççĕ. Ĕç мухтавлă, ђыслă йапала пулса тăрат. Çынсем ĕç çине ĕлĕкхи пек пăхасси улшăнат, ĕç хаваслăхĕ ÿсет. Епĕр ђăвашсен авалхи праçнăкĕ аван йенне ђĕртсе, çĕнетсе йарса, çавăнпа кăçалтан пуçласа кашни çулах хĕрлĕ акатуй ирттерме йышăнтăмăр. Хĕрлĕ акатуйĕнђе çуракинђе тунă ĕçе пăхса тухмалла.

Колхоçнĕксем, тата пайан колхосра мар, анђах унта кĕме хатĕр тăракан хресђенсем лайăх ĕçленĕ-и, йапăх ĕçленĕ-и? Лайăх ĕçленĕ пулсан мĕнле хăватпа ĕçленинђен, мĕнле майлă ĕçленинђен килнĕ вăл? Йапăххи мĕнреи килнĕ: кахаланса, клас тăшманĕ сăмахне йÿпленипе найанланса пули-пулми ĕçленинђен-и йе тата ĕçе йĕркеллĕ тума пĕлменнинђен? Хĕрлĕ акатуй вăхăтĕнђе çаксене пурне те сăнаса тишкĕреççĕ. Епĕр Вăрнар районĕ çуракине вăхăтра ирттерес тĕлĕшпе ђылай мала тухнине пĕлетпĕр. Районри колхоçнĕксемпе уйрăм хуçалăхлă хресђенсем нумайĕшĕ паттăрăн кĕрешнинђен килнĕ вăл. Анђах вĕсем пурте пĕр пек ђĕререн хастарлă ĕçленĕ теме пулат-и? Çук, пулмаст. Вĕсем хушшинђе ђи лайăх утарнĕксем малта пыраççĕ, вĕсем хăйсен примерĕпе ыттисен ĕç хаваслăхне ÿстерме пулăшаççĕ. Çавăнпа епĕр вĕсене парнелетпĕр. **Епĕр вĕсене «хайматлăх» тума «тус» тума мар,—колхос ĕçне лайăх туса пынăшăн, тырпул тухăçне ÿстерессишĕн малта кĕрешнĕшĕн, мĕн пур колхоçнĕксене пуйан пурнăçла пулас ĕçре малта пынăшăн парнелетпĕр.**

Пирĕн колхоçнĕксем, пĕлтĕрхипе танлаштарсан, ĕçе лайăхрах, йĕркеллĕрех, тĕплĕрех тума вĕренђĕç. Кулаксемпе поткулађниксене итлесе найанланакансене вĕсем пĕтĕм колхоçнĕксем умĕнђе намăслантараççĕ. Колхоçнĕк-

сем пуйан пурнăçлă пулмашкăн мĕнле çулпа пымаллине ăнланса илнине утарнĕксем, малта пыракан колхоссем кăтартса параççĕ.

Кăçалхи çуракинҫе кайа йулса пынă колхоссенҫен нумайĕшĕ малти ĕрете тухас çул çине йарса пусрĕç. Ҫи кайа йулса пынă потрайонсенҫен пĕри—Хутар тавращĕнҫи йалсем пулнă. Хаљ те унта колхосра хресҫенсен сахалтарах пайĕ пĕрлешсе тăратха, хаљ Хутар колхосĕ 35 проҫ. йахăн, Питушкинă 12 проҫ. т. ыт. çеç пĕрлештерсе тараççĕ. Анҫах вĕсем хаљхи çитĕнўсене кура малалла пыссăкăн йарса пусасси çинҫен калама пултараççĕ. Çĕнтерў вăл—кĕрешсе илнĕ йапала. Кĕрешў ку потрайонра уйрăмăнах çивĕҫ формăпа пынă. 1930-1931 ç.ç. çуркунне колхоçнĕксен масси, кулак хăтăртнипе колхосран тухас тесе хытă хумханă, хуран ывăсĕ йевĕрлĕ çавракa хут тавра алă пусса тухса сайавленисем сырнă. Колхос пурнăçĕ çинҫен кăтартнă кинокарттина та урăхла ăнлантарса паракансем тупăннă: Çав мĕнле хăвăрт ĕçлеççĕ унта, епĕр унашкал ĕçлеме пултараймастпăр, тенĕ. Пайан çуракине планлă срукҫенех те туса пĕтерни çинҫен, иртен ир акса хăварнă тырăсем маттурăн шавласа хăпарни çинҫен каласа тĕрĕссипех савăннă ҫухне çак çĕнтерўсем мĕнле йăвăр кĕрешў урлă пулнине пĕр минутлăха та манас пулмасť. Кĕрешў пĕтмен, пире малашне тата питрех пысăк ĕçсем кĕтеççĕ, вĕсенҫе, хаљхинҫен вирлĕрех çĕнтерў кирлĕ пирĕн клас тăшманне йăлтах пĕтерсе пăрахмалла.

Хĕрлĕ акатуй ирттернĕ ҫухне умри ĕçсем çинҫен манмалла мар. Ĕç пĕтрĕ, ĕçес те çийес тени ан пултăр. Пысăк ĕç тунă хыççăн ĕçшĕн савăнăç пултăр, ташлаҫҫăр, йурлаҫҫăр, авалхи акатуйăн аван йенĕсене ҫĕртҫĕр. Анҫах ĕçе хисепленĕ ҫухне, çĕнĕ ĕçсем ваљҫи вăй пухнă ҫухне ĕçсе ўсĕрĕлсе сумсăрланнисем ан пулҫҫăр.

## Çураки—ĕçĕн пуçламĕшĕ çеç

Йалхуçалăх ĕçĕ çуракипе пуçланаť çеç, пĕтмест. Çуракине ăнăçлăн ирттерни йалхуçалăх ĕçне малалла илсе пымалли ҫи малтанхи услови. Анҫах тырпул

тухӑҫӗ тата малалла пысӑк ҫӗнтерӳсемпе ӗҫлемесӗр пулмасть.

Ҫураки планӗ тулнӑ пирӗн. Уйрӑмӑн илсен, Вӑрнар районӗ плана 104 проц. тултарнӑ. Ҫапах ҫак план пахалӑх тӗлӗшпе пур йенҫен те тӗрӗс пулҫӗ теме пулать и? Ҫук, пулмасть. Акӑ, илер-ха ҫыхвӑрсене. Хуратул 70 проц., йасмӑк 84 проц., вир 50 проц. ҫеҫ акнӑ. Ҫак кулътурсем паха кулътурсем, вӗсене акса ҫитермелле, вӗсене акмашкӑн нумай ӗҫлемеллине пӗртте манма йурамасть. Ку вырӑн пысӑк ҫитменлӗх пулса тӑрать.

Йалхуҫалӑхӗнҫи тӗп сатаҫ пирӗн халҫ тырӑ тухӑҫне ӳстерессии. Ҫӑваш респуплӗкӗпе илсен, кӑҫал тырӑ тухӑҫӗ 13 проҫҫӑн ӳсмелле. Сирӗн район 20 проҫҫӑн ӳстерессишӗн кӗрешет. Урӑхла каласан, вӑл пӗлтӗр 5 пӑт илнӗ вырӑнне 6 пӑт тырӑ пухса кӗртессине пӗлтерет. Паллах ӗнтӗ, ҫак пысӑк ҫӗнтерӗве тумашкӑн ҫуракине аван иртернипех ҫитмест. Тырӑ лайӑх пуласси акротехнӗккӑ хушакан мӗн пур правӗлсене тӗрӗс, вӑхӑтра туса пырас пулать. Есӗр кусене пурне те пурнӑҫа кӗртнӗ тесе мухтанма пултараймастпӑрха.

Мӗнле ӗҫсем тӑраҫҫӗ ку тӗлӗшпе пирӗн умра? Кӑҫал пур ҫӗрте те нумай пусӑллӑ уй ҫине куҫса, тӗрӗс пусӑ ҫаврӑнӑҫне пуҫласа йаратпӑр. Сирӗн район ку ӗҫе 90 проц. таран тунӑ. Анҫах ҫакна пурне тӗрӗс тунӑ теме ҫук. Хӑшпӗр ҫухне пӗлтӗр ҫуртри акнӑ ҫӗр ҫинех ҫуртри акаҫҫӗ, мӗнле култтур хыҫҫӑн мӗн акмаллине акрономи хушнӑ пек пурнӑҫа кӗртмеҫҫӗ. Пусу ҫаврӑнӑшне тӗрӗс пурнӑҫа кӗртсе пырасси питех пысӑк сатаҫ, вӑл колхос ҫӗрӗ ҫинҫи йӗркесӗрлӗхе пӗтермелле. Ҫавӑнпа ун ҫинҫен пӗр минутлӑха та манма йурамасть.

Пирӗн хушӑра кивӗ йӑлапа ҫапла шухӑшлакансем пур: пӗр ӗҫне пӗтерес те, канас, вара теприне тытӑнас теҫҫӗ. Капла шухӑшлани пӗртте тӗрӗс мар, йулташсем. Ӗлӗк тырӑ акнӑ хыҫҫӑн Илле пророка йе турра шанса тӑнӑ. Ҫӑмӑр пулсан—тырри те пулать, тенӗ. Епӗр иртен ир ака урлӑ, йура пухса хӑварни урлӑ, тата ытти майсемпе ҫӑмӑр сахалтарах пулнӑ ҫухне те тырӑ аван пултӑр тесе тӑрӑшатпӑр. Епӗр пирӗн уйхирсене ҫӗнӗ,

халиҫҫен тума пӗлмен тырпулсем те акатпӑр. Тӗслӗхе вире илер-ха. Ӑна акса тӗрӗс пӑхса ӳстермен пирки хӑшпӗр вырӑнсенҫе вӑл иртнӗ ҫул ҫумкурӑк айне пулса пӗтнӗ. Ӑна кура вара: пирӗн вир пулмасть, теҫҫӗ. Мӗн айӑплӑ: вир-и, ҫӗр и? Вирӗ те, ҫӗрӗ те айӑплӑмар. Епӗр хамӑр айӑплӑ. Хамӑр йалан, вӑхӑтра ӗҫлесе пынӑ вырӑнсенҫе вӑл питех аван пулать. Ҫавӑн пекех тулӑ ҫинҫен те каламалла. Пирӗн таврара тулӑ пулмасть тесе шутланӑ халиҫҫен. Хаҫ вӑл ҫиперех пулать. Паллах ӗнтӗ, ҫаксене ҫине тӑрса тӑрӑшса, пӗлсе ӗҫлемесӗр тума ҫук. Ҫавӑнпа та епӗр тырӑ хӑй тӗллӗн пулассине кӗтсе ларма йураманнине питӗ хытӑ асӑрхаттаратпӑр.

Халех ирхи ҫӗртме туса пӗтерес пулать. Ҫӗртме туса пӑрахнипе ҫеҫ ӗҫ пӗтмест. Уйра ҫумкурӑксене ӳсме парас пулмасть, акма тухиҫҫен ик-виҫ хут сӳрелес пулать. Ирхи ҫӗртме вӑл ҫумкурӑксемпе кӗрешмелли тӗп майсенҫен пӗри, ҫавӑнпа унтан кирек мӗнле сӑлтавпа пӑрӑнни те сийенлӗ. Хӑшпӗри ҫапла калаҫҫӗ: ирхи ҫӗртме планне тултарма ҫук, мӗншӗн тесен выҫӑха ҫӳртемелли вырӑн йулмасть, выҫӑх апаҫӗ ҫук, теҫҫӗ. Вӑл уйрӑм колхосшӑн тӗрӗс те пуҫ, анҫах апла пулни ҫак колхос выҫӑх апаҫӗ акса тӑвас ӗҫ ҫине, ҫилос тӑвас ӗҫ ҫине ҫаврӑнса пӑхманине ҫеҫ пӗлтерет. Пӗрик ҫул кайарах ҫилос ҫинҫен питӗ нумай каларӗҫ, ҫилоссем хыврӗҫ. Анҫах кунта хаҫ ҫилосран паллах сивӗнни сисӗнет. Мӗн пирки апла вӑл? Ҫынсем ҫилоса курӑка сӗткенлӗ вӑхӑтра мар, типӗнме пуҫласан хываҫҫӗ, ҫимӗҫ хурас вырӑнне ҫара туратсем хураҫҫӗ, ҫитменнине тата тӗрӗс тытса усрамаҫҫӗ. Ҫакӑн хыҫҫӑн выҫӑх ваҫҫи апат лайӑх пулассине кӗтеҫҫӗ. Ун пек йурамасть. Ҫилос хывас тӗлӗшпе халех ӗҫлеме тытӑнас пулать. Кунпа пӗрлех тата ҫӗр ҫинҫе нумайрах выҫӑх апаҫӗ тума тытӑнас пулать. Малашне ыраш вырса илнӗ хыҫҫӑн ҫав вырӑнта тепӗр пӗр-пӗр курӑк акса илмелле пулӗ, т. ыт. те. Ҫак майсене сӑнаса пӑхас пулать, унсӑрӑн епӗр авалран пыракан йӑласен тыткӑнӗнҫен йӑварлӑхсӑр уйӑрлса кайаймӑпӑр.

Ҫумкурӑксене пӗтересси—питех пысӑк ӗҫ. Вӗсем калама ҫук нумай сийен кӳреҫҫӗ. Сирӗнте шӑйрӑклӑ

сухаласа акса хăварнисем, тасатман вăрлăхсемпе акнисем пур. Çавсем çумкурăксене ӳстереççĕ, ĕрӡетеççĕ. Ăçта çумкурăк пур—вĕсене халех пĕтермелле. Çум çумлас тĕлĕшпе ĕçленĕ ӡухне ку ĕçе ĕлĕкхи пек аӡасемпе хĕррăмсене çеç хушма пăрахас пулаť. Хаӡ ĕнтĕ паранкăпа пахӡа çимĕçĕсене çумкурăкран тасатнипех те çитмест, ытти мĕн пур тырпула та çумкурăкран хăтарас пулаť. Ку ĕç нумайăн ĕçлемеллескер, вĕсене орканисатçилеме пĕлни кирлĕ, мĕншĕн тесен кунта çын прикатăри ӡухлĕ çеç мар.

Епĕр кулаксене класĕпех пĕтернĕ йевĕрлех, колхос уйхирĕсенӡен, мĕн пур акакан çĕрсенӡен кирек мĕнле çумкурăке та ним хăвармиӡӡен пĕтермелле. Унсăрăн тырпул тухăçне ӳстерес сатаӡа, колхоçнĕксене пуйан пурнăçпа пурăнакан тума çук. Çавăн пекех сийен кӳрекен хурткăпшанкăпа кĕрешессине питĕ çивĕӡӡĕн лартатпăр епĕр.

Халех, пĕр кун та çухатмасăрах уйри тырпула пуçтарса кĕме хатĕрленме кирлине илтсен, хăшпĕрисем: тин акнă, анӡах çеç шăтса тухаççĕ, есĕр ун çинӡен калаçма та тапратрăр, теççĕ. Тĕрĕс, тин çеç шăтаççĕ-ха. Анӡах малтанах хатĕрленсе çитмен пирки мĕн ӡухлĕ тăкак пулнине пире иртнĕ çулсем питех уççăн кăтартса параççĕ.

Епĕр кăçал иртен ирхи ака иртертĕмĕр. Пĕтĕм çуракине пĕлтĕрхинӡен 3 ерне малтан пĕтертĕмĕр. Иртен ир акни ырашпа пĕр вăхăталлах пулма пултараť, ун хыçĕнӡен тӳрех пĕтĕм çуртрине пухса кĕртме вăхăт çитет. Вăхăт кĕскелет, ĕççем пĕр çĕре пухăнаççĕ, ĕçлеме крута килессине манас пулмасť.

Тырпула ӡăмăртанса хытма пуçласанах, тата хăш уӡаскă малтан пулнине кура, ытти пулса çитессине кĕтмесĕрех вырас пулаť. Кирек мĕнле пулсан та типессе кĕтсе тăма йурамасť. Ку тĕлĕшпе те пирĕн кивĕ хăнăхусене çĕнтерес пулаť, тырра тăкăнма памалла мар. Пĕлтĕрхи урока аса илерха. Тăккаланӡăксăр пуçтарса кĕресси çинӡен сăмах йумах вакларĕç, „сăмах пăтти" пĕçерӡĕç, çав вăхăтра ун пирки ĕçне хăйне тумасăр хăварӡĕç, тырă нумай таккаланса çухалӡĕ. Машинсем çумне тăкăннă тырра пухакан йешӡĕк („зерноулови-

тель“) лартнă çерте пĕлтĕр кектар пуçне 1—1½ пăт тăккаланҫăк тытса йулнă. Çак ҫыхвăр та типтерлĕ пуçтарса кĕресси мĕн пек паха вырăнта тăнине кăтартаť. Шутласа çеç пăхăрха. Сăмахран, епĕр 200 пин кектар çинҫи тырра пуçтарса кĕнĕ ҫухне сахалтан та 200—300 пин пăт тырă ытларах илме пултартпăр вĕт. Çавăнпа та мĕн пур машинсене халех хатĕрлесе хумалла, кашни машин çумĕнҫе тăккаланҫăка тытакан йешҫĕксем пулҫҫăр, пĕри вансан теприне лартмашкăн хатĕр пултăр. Çурласене шăлласа хурас пулаť. Турттармалла урапасем, вĕрен-тилкепе пурте хатĕр пулмалла, вĕсене мĕнле хатĕрленине çак кунсенҫех тĕрĕслесе тухмалла.

## Выљăх-ҫĕрлĕх ĕрҫетес ĕçе вăйлатар

Йалхуçалăх тĕлĕшпе тăракан тепĕр пысăк сатаҫ вăл—выљăх ĕрҫетесси. Епĕр ку ĕçре те пысăк çитĕнӳсем турăмăр, колхоссенҫе выљăх шуҫĕ ӳссе пыраť, анҫах, паллах, çителĕклĕ мар.

Кунта та, „Акатуйĕнҫе“ те есĕр уйхир утарнĕкĕсее палăртатăр. Çамрăксене те, хĕрарăмсене те, шур сухаллă стариксене те премилеттĕр. Çав вăхăтрах выљăх-ҫĕрлĕхе: лашасене, ĕнесене лайăх пăхнăшăн премилени палăрсах каймасť. Пури пирĕн ку ĕçре утарнĕксем? Пур. Вĕсене палăртас пулаť, вĕсен лайăх оппăҫĕсемпе, усăллă ĕç майĕсемпе усă курас пулаť. Хаљ ку ĕç кайарах йулса пыраť.

Выљăха сиктерес ĕçе илĕр. Вăл çителĕклĕ пулса пымасť. Лашасене сиктерме хăш ҫух вăхăт çук теççĕ. Пĕртте тĕрĕс мар вăл. Колхоссенҫе выљăх çителĕклĕ марри пуриншĕн та паллă мари вара? Колхоçнĕксене пуйан пурăнакан тумашкăн, кашни колхоçнĕк килĕнҫе ĕне пулмалла тенине пурнăçа кĕртмешкăн хаљхи пек ĕçлени çитмест.

Аратлă вăкăрсене те епĕр лайăх пăхса, вĕсемпе тĕрĕс усă курма пĕлмеспĕр-ха. Ҫас-ҫасах вăкăра йал тăрăх çӳрептерееççĕ, кам хăй патне кĕртет—вăл тăрантараť, унтан теприн патне куçаť. Ку йатсăрлăха, опеслиҫкăна пĕтерсе хурас пулаť. Колхос тытаť пулсан—вăл ответлă пултăр, колхос вăкăршăн ответлă çынна уйăртăр.

Колхос ӗнисем нумайӗшӗ сӗт сахал параҫҫӗ. Ҫав вӑхӑтрах пирӗн хушӑра ӗнесене нумайрах сӗтлӗ тӑвакан оппӑтсем те сахалах мар. Ҫав оппӑтсене сӑнаса вӗренес пулаť, ӗнерен нумайрах сӗт илме вӗренес пулаť.

Парттипе правиттӗлствӑ аш-какай хатӗрлевӗ ҫинђен кӑларнӑ саккун тӑрӑх, патшалӑх умӗнђи опесаттӗлствӑсене тултарнӑ колхоҫнӗксемпе йетинолиђнӗксене аш-какайа рынӑкра сутма ирӗк параť. Ҫак суккун колхоссемпе йетинолиђнӗксене выђӑх ӗрђетме пысӑк май параť, ҫак майпа ҫителӗклӗ усӑ курма пӗлместпӗр-ха епӗр. Ку саккуна пур ӗҫҫыннисем хушшинђе лайӑх ӑнлантарса парса, выђӑх ӗрђетес ӗҫре те уйхир ӗҫӗнђи пекех утарлӑ йухӑма вӑйлатса йарас пулаť.

Ҫапла хӑтланни пире мар усӑ кӳрет, кулака ҫеҫ усӑ кӳрет. Вӑтама колхоса кӗнӗ хыҫҫӑн темӗскер сӑлтав тупса раскулађӗт тусан, тепӗр вӑтамӗ вара питрех иккӗленме пуҫлаť, колхоса кӗме шикленсе тӑраť. Хаđ епӗ уйрӑм хуҫалӑхра хамӑн пурлӑхпа хам ӗҫлетӗп, мана кулак тесе шутламаҫҫӗ, колхоса кӗрес мар-ха, тесе шухӑшлаť вӑтам. Ђӑнахах та, кам хӑйне тӑшман пултӑр, кам хӑйӗн пурлӑхне салатса йама колхоса кӗтӗр? Вӑл шухӑшлаť: епӗ те ӗлӗк ђухне кӑшт тара илсе акнӑђђӗ, ҫавна аса илӗҫ колхоса кӗрсен. Йӗркесӗрленсе, сумсӑрланса вӑтамсене раскулађӗт тунӑ колхоссем тӗлӗшпе илсен вӑл тӗрӗсех шутламасти вара? Тӗрӗсех шутлаť. Ҫавӑнпа епӗр ку йӗркесӗрлӗхе хирӗҫ пит хытӑ кӗрешетпӗр.

Колхоссенђен ђӑн-ђӑн кулаксене кӑларса ыватмалла, колхоссене ҫирӗплетмелле, пӗтӗм ђухӑнпа вӑтам хресђенӗн колхоссем тавра пӗтӗҫмелле—ак мӗнле сатаđ пирӗн. Ҫавӑнпа та колхос нумайранпа йышланмасӑр, ҫӗнӗ хуҫалӑхсене хутшӑнтармасӑр тӑраť пулсан—ҫав колхоса тӗрӗслесе тухас пулаť, унти кулакла шухӑшлисене хӑйсен вырӑнне кӑтартас пулаť.

**Епӗр ђухӑнсене калатпӑр: сана совет влаҫӗ мӗн пуҫланнӑранпах пулӑшса пыђӗ, налоксенђен, самооплошенисенђен хӑтарђӗ, хаđ сан умра пуйан пурӑнмалла ҫул уҫӑлђӗ, санӑн пурнӑҫу колхосра пулмалла. Епӗр вӑтамсене калатпӑр: уйрӑм хуҫалӑхпа пурӑнса ҫити-ҫитми пурнӑҫран тухма ҫук, сан пурнӑҫу колхосра. Ҫавӑнпа пирӗн**

**йенҕен вĕсене колхоса кĕме, унта кĕрсе пуйан пурăнакан пулма пулăшни кирлĕ.**

Пирĕн йалсенҕе ҕас-ҕасах тата колхоса хирĕç тухса каланăшăн, йе ĕçе вăхăтра туманшăн тӳрех арĕслеме, хупса лартма пăхнине тĕл пулма пулаŤ. Çакнашкал хăтланни саккунсăр ĕç туни пулаŤ, вак-тĕвек ĕçшĕн тытса хупни, атминистраттивлă майсем йышăнни тĕрĕс ĕçлеменни пулаŤ. Ун пек ҕухне ҕăн-ҕăн кулакпа, совета хирĕçле кĕрешӳ туса йертсе пыраканпа кĕрешес вырăнне—ҕĕлхене ҕарайман, йе çивĕҕ ҕĕлхеллĕ вăтамсемпе ҕухăнсене те тытса хупаççĕ. Ун пек хăтланма йурамасŤ, йулташсем.

Репреççи майĕпе клас тăшманĕсемпе, вретиттĕлсемпе кĕрешес тĕлĕшпе хытă ĕçлемелле. Вĕсене нимĕнле хĕрхенӳ те çук. Анҕах çын хăй тĕттĕм пирки, айван пирки кулак сăмахĕ хыççăн пыраŤ пулсан—ăна тăрă шыв çине кăлармалла, вăл клас тăшманне итленĕшĕн пĕтĕм халăх умĕнҕе намăслантармалла. Клас тăшманĕ илĕртнине итлекене пурин куçĕ умĕнҕе намăслантарса ун çине пурте пӳрнепе тĕллесе кăтартҕăр: ав вăл пирĕн тăшман çулне тытакан, тетҕĕр. Пирĕн колхос çирĕп, ăна никам та çĕнтерме пултараймасŤ, çавăнпа та кирлĕкирлĕ мар ҕухне репреççи туни пайанхи куншăн йурăхсăр. Пĕтĕм ĕçкресҕенсем çирĕп пĕрлешсен—кулак майлă калаçакан пĕр çын та хăрушă мар.

Çав вăхăтрах сăтăр тăвакансене, колхоса хирĕç кĕрешӳ орканисатсилекенсене хирĕç кĕрешессине вăйлатса пымалла. Кулаксем хăйсем пĕтессине сиссе йулашки мĕн пур вăйпа, темиçе тĕрлĕ майсемпе те хирĕçеççĕ. Вĕсем колхоса кĕрсе шалтан çиме тăрăшаççĕ, колхос претприйаттийĕсене ĕçрен кăларма хăтланаççĕ. Вĕсем трактористсем хушшине кĕрсе те трактăрсене пăсаççĕ—сăтăр тăваççĕ. Вĕсем колхос пурлăхне, патшалăх пурлăхне çаратас ĕçе орканисатсилеççĕ. Вĕсем кĕтмен вырăнтах сăтăр туса, ĕçе пăсма, йĕркене пăсма, ĕçри тистсиплинăна пăсма тăрăшаççĕ. Çавăнпа вĕсен мелĕсене пурне те тăрă шыв çине кăларса, вĕсене ним хĕрхенмесĕр хыттăн çапса салатас пулаŤ. Мĕншĕн тесен кулак вăл колхос йĕркин ҕи хайар тăшманĕ пулса тăраŤ.

Çак мĕн пур ĕçре клас тăшманĕсене çапса салатмашкăн вăй пур сирĕн, сире йертсе пыракансем пур. Машинпа трактăр стантси çумĕнђи политтĕк пайĕ тесĕске вăхăтрах сире пысăк пулăшу пама пуçларĕ. Сирĕн сатађ—парттипе правиттĕлствă тума калакан ĕçсене вăхăтра, тĕрĕс туса пырасси, патшалăх умĕнђи опесаттĕлствăсене вăхăтра тултарасси, клас тăшманне хирĕç сыхлăха ўстересси, пољшевикла колхоссемшĕн, колхосра пуйан пурнакан пулмашкăн ђĕререн хастарлă ĕçлесси пулаť.

## Сотсиалисăм строиттĕлствине—укçа-теннĕ

Хађ есĕр шкулсем тĕлĕшпе тата ытти строиттĕлствă тĕлĕшпе ыйтусем лартатăр. Вăл тĕрĕс. Мĕншĕн тесен епĕр мĕн ђухлĕ малалла кайатпăр, кирлисем тесĕнĕрен те сĕнĕрен сиксе тухаççĕ. Анђах çаксене пурне патшалăхран ыйтнипех тума çукки те паллă. Шкулсем, çулйĕр лайăх пулђђăр тесен, йалхуçалăх машинĕсем нумайланђђĕр тесен патшалăха хăйне те кивçен парса пулăшни кирлĕ. Епĕ сайом çинђен калатăп. Сайом сарас ĕç сирĕн çителĕклĕ пыраť теме çук. Сиртен малта пыракан районсем пур. Тата сирĕн хушăра та хăшпĕр йалсоветсемпе колхоссем сайома вырнаçтарас ĕçе лайăх туса пынă вăхăтрах, ыттисем йулса пыраççĕ.

Ĕнерхи кун Мăн Йавăшра хĕрлĕ „акатуй“ иртернĕ ђухне çав йалсовеђĕ хăйĕн çуракинђи çĕнтĕрĕвĕсене кура колхос çамрăксен шкулĕ тума укçа ыйтрĕ. Вĕсен çĕнтерĕвĕ ђăнахах пысăк. Пĕлтĕр Мăн Йавăш колхосĕ йапăх ĕçлесе 65 кектара уйрах пăрахса хăварнă пулсан, кăçал вăл çуракине малтан пĕтернĕ, ĕç тистсиплинине йусанă. Епĕ вĕсене: шкул сире ђăнахах та кирлĕ, сирĕн çавăнпа та сайом укçине хăварт пухас пулаť, вара шкулĕ те пулĕ, терĕм. Йалсовет претçетаттĕлĕ Акеносăв йул. сайом укçине майăн 28-мĕшне тултарма сăмах пађĕ. Сăмах пани сайа каймарĕ, вăл пайанах, майăн 25-мĕшĕнђех, кунта килсе 101% пухни çинђен пĕлтерђĕ. Акă мĕнле ĕçлемелле. Ĕçлеме хастарлăх пур, вăй пур—ĕçлес килни, ĕçлеме пĕлни çеç кирлĕ. Çак укçа ђиновниксене усрама мар, ĕçлемесĕр выртакан пуйан-

сене мар, хамăрăн строиттĕлствăна, хамăрăн пурнăçа лайăхлатма кайнине пĕр минутлăха та асран йарас пулмасť. Колхос сайом вырнаçтарса укçа хывас ĕçре малта тăрса, йетинолиђнĕксене хăй хыççăн илсе пымалла. Сайом ĕçне утарлă тултармасăр пĕр колхос та йулмалла мар.

Тепĕр ыйту—çулйĕр ыйтăвĕ. Есĕр пĕлеттĕр, Ђăваш республĕкĕ çулйĕр строиттĕлстви тĕлĕшпе пĕтĕм Сойусра малта пыраť. Ытти крайсемпе республĕксем пиртен курса ку ĕçе вĕренеççĕ. Анђах сирĕн районран вĕренмелли сахал вара. Сирĕн çулсем йапăх, çулсене ђас-ђасах тата мăшкăласа тунă пек тунă. Есĕр çулйĕр тĕлĕшпе ĕçлемен теме çук. Ĕçленĕ. Çапах ĕçе туса çитермен, тĕплĕ туман. Илĕрха Вăрнар çывăхĕнђи çулсенех. Вĕсене купаланă, ђавнă, апла пулин те çулĕсем çӳреме йурăхлă мар. Мĕн пирки? Çулсене кукăђ йевĕрлĕ купаланă, варринђен çӳреме çук, айаккисем темĕн сарлакăшпе сĕвек. Кам çынни, мĕнле шухăшпа, мĕнле пуçпа тунăши ку çулсене?

Ун пек ĕçлеме йурамасť, йулташсем. Çул лайăххи вăл колхоссемшĕн хăйсемшĕн, хресђенсемшĕн хăйсемшĕн паха. Сирĕн район кăçал ĕнтĕ кайа йулнисене пĕтерес тĕлĕшпе пысăк çитĕнӳсем турĕ. Ку тĕлĕшпе те кайа йулнине хăвăртрах пĕтерес пулаť. Есĕр ăна тума пултараттăр, ăна тусан вара пĕтĕм Ђăваш республĕкĕ пĕтĕм Совет çĕршывĕнђе малти вырăнне çухатмĕ, ыттисемшĕн тата пысăкрах пример пулса тăрĕ. Çакăншăн парттипе комсомол йађейккисен, советсен çак умри мĕн пур сатађсем патне тата çывăхрах çаврăнса хăйсен тавра колхоçнĕксемпе ĕçхресђенсене тата хытăрах пĕтĕçтерсе пырас пулаť. Пирĕн республĕк нумай ĕçсем пирки крайрипе тĕпри оркăнсенђен куçса çӳрекен йалавсем илнĕ! Çак йалавсем пире çĕнĕ çĕнтерӳсем тума мопилисатсилемелле. Епĕр вĕсене хамăр алăра çӳлте тытса пымалла ,хамăр алăран йани пĕтĕм Ђăваш республĕкĕшĕн пысăк намăс пулнă пулĕђђĕ.

Çитĕнӳсемпе çĕнтерӳсем çинђен малалла, çĕнĕ çĕнтерӳсем патнелле! (нумайђђен алă çупаççĕ).

Редактор Н. Васянка. Тех. редактор А. Быков.
Отв. корректуру держал Н. Андреев.
Послано в производство 4/VI-33 г. Подписано к печати 29/VI—33 г.
Формат 72×105 Об'ем 1,25 п. л.
48.000 з. в п. л. Уполн. Чувашлита № 1426. Тираж 3100.

Типография № 1 Чувашгиза, г. Чебоксары, Канашская, 16. Зак. № 579.

Хакĕ 15 пус.

С. П. Петров, В. И. Токсин. Красный акатуй—праздник колхозно-весеннего сева и дальнейших побед

Чувашгиз 1933 Чебоксары